





чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

203/26609/ № Эрне кун, 2014, юпа (октябрь), 10 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


Шупашкар 2014

# Тăнăçлăхпа туслăха Чăваш Ен те çирĕплетет



**Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне хутшăнакансене тата унăн хăнисене**

Хисеплĕ туссем!

Сире Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумĕ уçăлнă ятпа саламлатăп.

2014 çул çĕр-шывăмăр спорчĕшĕн чăннипех триумф шайĕнче пулчĕ. Раççей атлечĕсем Сочири Олимп тата Паралимп вăййисенче çĕнсе илнĕ медальсен шучĕпе рекорд турĕç, пĕтĕм тĕнчери пысăк ытти ăмăртура ăнăçлă тупăшрĕç. Çак çитĕнӳсем пире Тăван çĕр-шывăмăрпа мăнаçлантараççĕ, çитĕнекен ăрусемшĕн шанăç кӳрекен тĕллев пулса тăраççĕ.

Пирĕн паянхи тивĕç – пысăк çак хăвата упрасси, пулас çĕнтерӳсен çирĕп никĕсне хывасси, обществăра физкультурăпа сывă пурнăç йĕркине аталантарма ĕçпе пулăшасси. Тĕп тĕллевсен шутĕнче – çĕнĕ йышши спорт инфратытăмне йĕркелесси, çĕнĕ стадионсемпе пăр кермесенсем, сывлăх тата тренировка центрĕсем тăвасси, шкулсемпе аслă вĕренӳ заведенийĕсенче физкультура вĕрентĕвĕн пахалăхне ӳстересси. Тата, паллах, хăйĕн речĕсенче унта хутшăнакансен пысăк йышне, çав шутра çамрăк ăру представителĕсене пĕрлештерекен «Ĕçлеме тата хӳтĕлеме хатĕр» комплекс позицийĕсене çирĕплетес енĕпе уйрăмах тимлĕ пулмалла.

Форумра эсир пĕлтерĕшлĕ ытти темăна та сӳтсе явасса, тĕл пулура çуралнă шухăшсемпе сĕнӳсем ĕçре пулăшу кӳрессе шанатăп.

Сире тухăçлă та конструктивлă тавлашусем тата пĕтĕм ыррине сунатăп.

**Владимир ПУТИН,**
**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ.**



**Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне хутшăнакан хисеплĕ хăнасем!**

Сире асаттесен йăлисене, пуян та хăйне евĕрлĕ наци культурине, пурнăçăн йăлана кĕнĕ йĕркине тирпейлĕ упракан, 128 национальноç тата 7 этнос ушкăнĕн представителĕсем килĕштерсе, туслă пурăнакан пархатарлă чăваш çĕрĕ çинче чун-чĕререн саламлатăп.

Пирĕн патшалăх политикин тĕп тĕллевĕсем – наци сывлăхне çирĕплетесси, ача çуратассине, пурнăç тăршшĕне ӳстермешкĕн ырă условисем йĕркелесси. Çак политикăна пурнăçламалли чи меллĕ инструментсенчен пĕри – массăллă физкультурăпа спорт, сывă пурнăç йĕркипе сывă апатлану пропаганди.

Республикăра спортпа физкультура кашни çыннăн пурнăçĕн пĕр пайĕ пулса тăтăр тесе меллĕ условисем йĕркелетпĕр. Юлашки çулсенче 50 ытла спорт объектне реконструкциленĕ, яллă мĕн пур районта çĕнĕ йышши физкультурăпа спорт комплексĕсене хута янă, стадионсене, шкулсен спорт залĕсене çĕнететпĕр, хуласен урамĕсенче тата нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенче тренажер комплексĕсем вырнаçтарнă, çакă тĕрлĕ ӳсĕмри мĕн пур çынна спортпа çывăхланма май парать. Ăнсăртран мар ĕнтĕ Шупашкар кăçал Пĕтĕм Раççейри пенсионерсен I Спартакиадине йышăнчĕ.

Çĕнĕ йышши спорт бази Чăваш Ене тĕрлĕ шайри ăмăртусене йышăнма май парать. 2013 çулта кăна республикăра 1700 ытла спорт ăмăртăвĕ иртнĕ, вĕсене 280 пин çын ытла хутшăннă.

Халăх массăллă спорт акцийĕсене хапăл тăвать. 2013 çулта Шупашкарта «Çăлтăрпа пĕрле ирттернĕ зарядка» 30 пине яхăн çынна пухрĕ, Раççейпе Европăн Рекордсен кĕнекине кĕчĕ, Чăваш Республики вара çулталăк кăтартăвĕсем тăрăх Раççей Правительствин спорт енĕпе паракан наци премине тивĕçрĕ.

Ачасен физвоспитанине лайăхлатас енĕпе уйрăмах тимлĕ ĕçлетпĕр. 2011 çулта спорт шкулĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетес тĕллевпе Чăваш Енри хуласемпе районсенче тунă физкультурăпа спорт комплексĕсен пурлăхне вĕсен балансне куçартăмăр. Çак йышăну ФСКсемпе усă курассин тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерме, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенчи занятисем ирттермелли условисене лайăхлатма май пачĕ. Кăтартăвĕ куç кĕрет: республикăри спорт шкулĕсене çӳрекенсен тӳпи 2010 çулхи 19,5 процентран 2013 çулта 24 процент таран ӳсрĕ, çав вăхăтрах мастер тата разрядник спортсменсене хатĕрлесси икĕ хут пысăкланчĕ /2010 çулта – 475, 2013 çулта – 964 çын/.

Шансах тăратăп: Пĕтĕм тĕнчери V «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумĕ çынсем спорта юратассине малалла аталантарма пулăшĕ, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансемшĕн ăсхакăлпа вăй-хăват енĕпе çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарĕ.

Форума хутшăнакансене пурне те ĕçре ăнăçу, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм тата спортра çĕнĕ çĕнтерӳсем сунатăп!

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**



**Хисеплĕ ĕçтешĕмсем!**

Хаклă туссем!

Раççей Федерацийĕн Спорт министерствин ячĕпе, çавăн пекех хамăн ятпа 2014 çулхи Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне хутшăнакансене тата унăн хăнисене саламлатăп.

Тĕнче шайĕнчи пысăк турнирсем иртекен арена пулнă май Раççей Федерацийĕ тĕнчене спортри пуçарусене пурнăçа кĕртсе регионсен шайĕнче те, пĕтĕм çĕр-шывра та социаллă пурнăçпа экономикăн никĕсре шутланакан тĕллевĕсене пурнăçлама май пуррине ĕнентерет.

Юлашки çулсенчи сумлă спорт мероприятийĕсем пуян еткерпе тивĕçтерчĕç, унăн никĕсĕнче – Раççей гражданĕсем сывă пурнăç йĕркине тытса пыма ăнтăлассине çирĕплетни.

Çакă патшалăх спорт енĕпе тытса пыракан политика тухăçлăхне тепĕр хут ĕнентерет. Иккĕленместĕп, отраслĕн паянхи управлени тытăмне çирĕплетессине çак çулсенче шăпах спорт дискуссийĕсен хăйне евĕрлĕ площадкин статусне çĕнсе илнĕ форум мероприятийĕсем пысăк тӳпе хыврĕç.

Çитĕнӳсем хамăрăн вăя шанма май параççĕ. Паян эпир халăхăн мĕн пур категорийĕ физвоспитани тытăмĕпе усă курассине тивĕçтерес, çĕр-шывăмăр спорчĕн конкурентлăхне аталантарас енĕпе пысăк çĕнĕ тĕллевсем лартатпăр.

Форума хутшăнакансене тата унăн хăнисене интереслĕ хутшăну, палăртнă тĕллевсене пурнăçлама тата професси енĕпе ăнăçусем сунатăп!

**Виталий МУТКО,**
**Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ.**



Владимир ИВАНОВ сăн ӳкерчĕкĕ

«Спортри пĕрлĕхре – тĕнче тăнăçлăхĕ: пĕтĕм ĕçсен стратегийĕ» пленарлă лару Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» Пăр керменĕнче иртрĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ Виталий Мутко ертсе пычĕ. Виталий Леонтьевич ларăва уçнă май чи хаклă хăнасемпе паллаштарчĕ. Вĕсен ретĕнче – РФ Правительствин Председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович, Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн /ООН/ Генеральнăй секретарĕн спорт ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пулăшуçи Вильфред Лемке, студентсен Пĕтĕм тĕнчери Союзĕн президенчĕ Код Луи Гацен, «Спорт-Аккорд» пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕн президенчĕ Мариус Визер, РФ Патшалăх Думин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ, Раççей Олимп комитечĕн президенчĕ Александр Жуков, Олимп вăййисен тата тĕнче чемпионĕсем – РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ Александр Карелин, Олег Саитов, Александр Попов, Татьяна Казанкина, Александр Сальников, ытти çăлтăрсемпе тĕнчери тата çĕр-шыври спорт федерацийĕсен ертӳçисемпе паллă тренерсем.

Форума хутшăнакансене Раççей Президенчĕ Владимир Путин саламларĕ.

– Паян Шупашкарта физкультурăпа спорта аталантарас ыйтусемпе Пĕтĕм тĕнчери V форума уçрăмăр. Пирĕн çĕр-шыв Пĕтĕм тĕнчери спорта аталантарас тĕлĕшпе сулмаклă вырăн йышăнать. Спортри ăсталăха ӳстерессипе тата кашни регионтах физкультурăпа спортра массăлăха малалла аталантарассипе нумай курăмлă ĕçлетпĕр. Эпĕ шанатăп, хамăр çĕнсе илнĕ позицие тата çӳллĕрех шая çĕклĕпĕр, – терĕ Владимир Владимирович.



сар.ru сăн ӳкерчĕкĕ

Аркадий Дворкович вице-премьер «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума хутшăнакансене пурне те РФ Правительстви ячĕпе Шупашкарта çĕр-шыври физкультурниксемпе атлетсен çулталăкри чи пысăк пухăвĕ пуçланнă ятпа ăшшăн саламларĕ.

– Юлашки çулсенче Раççей чăннипех те тĕнчере спорт çĕр-шывĕ пулса тăчĕ. Пирĕн шĕкĕр хуласенче кашни уйăхра тенĕ пекех спортăн тĕрлĕ енĕпе тĕнче тата Европа чемпионачĕ ирттереççĕ. Нумаях пулмасть кăна Челябинскра – дзюдо, Хусанта вара илемлĕ гимнастика енĕпе тĕнче чемпионачĕсем вĕçленчĕç. Асрах-ха пĕлтĕр Хусанта иртнĕ студентсен Пĕтĕм тĕнчери XXVI Универсиади. Ăна нумайăшĕ нимĕн ӳстермесĕр çуллахи Олимп вăййисемпе танлаштарчĕ. Спорта эпир политикăпа çыхăнтарасшăн мар. Вăл çынсен пурнăçне лайăхлатма, çĕр-шыв экономикине тĕреклетме пулăшнипе пĕрлех халăхсен туслăхĕпе тĕнчери тăнăçлăха çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ Аркадий Владимирович.

Ларура çавăн пекех Мариус Визерпа Вильфред Лемке, «Спорт пуриншĕн те» Пĕтĕм тĕнчери Ассоциаци Президенчĕ Хо Чонг, пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕн /ФИДЕ/ президенчĕ Кирсан Илюмжинов, Раççей Олимп комитечĕн ертӳçи Александр Жуков, Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ, спорт министрĕсем Дмитрий Ливановпа Виталий Мутко сăмах каларĕç.

**Петр СИДОРОВ**









# Владимир ПУТИН: Чăваш Республики – спорт енĕпе кăтартуллă регион




*Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвĕ иртрĕ. Ăна РФ Президенчĕ Владимир Путин ертсе пычĕ.*

Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич, канаш членĕсем /пурĕ 32 çын/ тата ытти хăна хутшăнчĕç. Ларура 2016-2020 çулсенче спортăн пурлăхпа техника базине аталантарас тата физкультурăпа спорт мероприятийĕсен тытăмне лайăхлатас ыйтусене сӳтсе яврĕç.

«Паянхи уяв Пĕтĕм тĕнчери утмалли кунран пуçланни савăнтарчĕ. Çакнашкал мероприяти пирĕн çĕр-шывра пĕрремĕш хут. Хăвăрт утас енĕпе тĕнче ăмăртăвĕсенче палăрнă спортсменсемпе мăнаçланакан регионта пуçласа иртни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Раççейре çуран тата йĕлтĕрпе чупас енĕпе массăллă стартсем йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ку та лайăх пуçару, малашне те ирттересчĕ ăна. Çак кунсенче хамăн та 9 километр утмалла пулчĕ, халĕ те ура ыратать-ха, – ларăва кăмăллăн уçрĕ Владимир Владимирович. – Пуш уйăхĕнчи /кăçал Мускавра иртнĕ лару çинчен сăмах пырать. – **А.М./** ларура палăртнă тĕллевсем пурнăçланма тытăнни кăмăл-туйăма çĕклет. Ун чухне эпĕ массăллă спорта аталантарасси, кашни çынна физкультурăпа туслаштарасси, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командине тата спорт резервне хатĕрлесси пирки сăмах пуçарнăччĕ. Анчах та вĕсене пурнăçласси пурлăхпа техника бази пуян пулнинчен килет. Çавăн пекех спорт мероприятийĕсен тытăмне лайăхлатмалла: çынсем, уйрăмах çамрăксем, унта хутшăнса хăйсене кăтартчăр, вĕсем сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хавхалантарччăр. **Аса илтеретĕп: 2020 çул тĕлне пирĕн çĕр-шывра спортпа туслисен йышĕ 40 процентран кая мар пулмалла. Хальхи вăхăтра – 27%. Чи лайăххи – çак кăтарту çултан çул ӳссе пыни. Çапах ку çителĕксĕр.** Иртнĕ ларура эпир «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» комплекса тепĕр хут чĕртсе тăратма, спорт клубĕсен йышне ӳстерме тата Раççейре Пĕтĕм тĕнчери «Спорт – пурин валли те» юхăм пулăшнипе тĕрлĕ мероприяти ирттерме йышăнтăмăр», – терĕ çĕр-шыв Президенчĕ.

Владимир Путин канаш членĕсемпе хăнасене малашне пурнăçламалли çĕнĕ тĕллевсемпе те паллаштарчĕ. Федерацин «Физкультурăпа спорта аталантарасси» тĕллевлĕ программин вăхăчĕ тепĕр çул вĕçленсе пынă май уйрăмах выранлă ку. Вăл каланă тăрăх – çĕнĕ проекта РФ Правительстви çирĕплетнĕ, ун валли 2020 çулччен федераци бюджетĕнчен 73,9 млрд тенкĕ уйăрнă. «Пĕчĕк бюджетлă объектсем тумалла /кунта сăмах картишсенче е парксенче спорт лапамĕсем пулмалли çинчен пырать. – **А.М/.** Вĕсем çынсене питĕ кирлĕ. Ку енĕпе регионсен, муниципалитетсен тата общество организацийĕсен тăрăшмалла. Çак ĕçе предпринимательсене явăçтармалла. Çĕнĕ программăра уйрăм регионсенче спорта аталантарас темăна та вырăн уйăрнă. Уйрăмах Крымпа Севастопольти спорт объекчĕсене çĕклемелли çине пусăм тунă. Вĕренӳ учрежденийĕсенчи спорт керменĕсен те пушă лармалла мар. Киввисене юсамалла тата çĕннисем тумалла», – пусăмласа каларĕ Владимир Путин.



РФ спорт министрĕ Виталий Мутко юлашки çулсенче тунă ĕçсем тата малашне пурнăçлама палăртнă тĕллевсем çинче чарăнса тăчĕ. «2006 çултанпа Раççейре спортăн 33 пин объектне хута янă. Ку енĕпе пире уйрăмах партнерсем пулăшаççĕ. Акă темиçе çул каялла «Газпром – ачасене» акци старт илчĕ. Предприяти пулăшнипе 73 регионта спорт керменĕсем çĕкленнĕ. Кашни республикăпа облаçре спорт хатĕрлевĕн центрĕсене тума йышăннă. Çакă спортăн уйрăм енĕсене вăйлăрах аталантарма май парĕ», – терĕ Виталий Леонтьевич. Спорт ведомствин ертӳçи пирĕн çĕр-шывра çывăх çулсенче иртекен ăмăртусене епле хатĕрленни пирки те каласа пачĕ, килес çул Шупашкар йышăнакан Европа чемпионатне çӳллĕ шайра йĕркелеме шантарчĕ.

Ларура çавăн пекех РФ вĕренӳ министрĕ Дмитрий Ливанов, çăмăл атлетсен Пĕтĕм Раççейри федерацийĕн президенчĕ Валентин Балахничев, РФ Паралимп комитечĕн председателĕ Владимир Лукин, Чул хула облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Валерий Шанцев, Олимп комитечĕн вице-президенчĕ Владимир Лисин тата ыттисем калаçрĕç. **Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Енре спорт инфратытăмне аталантарас енĕпе нумай ĕç тунине палăртрĕ. «Ятарлă программăсемпе килĕшӳллĕн республикăра спортăн 50 объектне çĕкленĕ. Кашни районпа хулара физкультурăпа спорт комплексĕсем тунă, вĕсене пурне те спорт шкулĕсене pană. Физкультурăпа спорт çынсен сывлăхне çирĕплетет кăна мар, çыннăн пурăнас кун-çулне вăрăмлатать. Юлашки çулсенче демографи ларутăрăвĕ лайăх енне улшăнчĕ: çуралакансен йышĕ ӳсрĕ», – пĕлтерчĕ Михаил Васильевич. РФ Президенчĕ Чăваш Ен Пуçлăхне физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата хăй те сывă пурнăç йĕркине пăхăнса ыттисене тĕслĕх кăтартнăшăн тав турĕ.**

Лару хыççăн Владимир Путин Пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕсен тата хамăр çĕр-шыври спорт федерацийĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕ. Унта вĕсем тĕрлĕ ыйтăва пăхса тухрĕç. РФ Президенчĕ нумаях пулмасть çĕнетнĕ керменпе паллашрĕ, манежра тренировка ирттерекен çамрăк спортсменсемпе курса калаçрĕ.



■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Владимир ИВАНОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

УЯВ ХРОНИКИ

# Форум зарядкăран пуçланчĕ



*Çапла, «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спор форумĕн пĕрремĕш кунĕ хула çыннисем «çăлтăрпа» ирхи зарядка тунинчен пуçланчĕ.*

Пĕрлехи зарядка ирттересси пирĕн республикăра йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Сăмах май, Шупашкарта çулталăкра 400 ытла спорт мероприятийĕ йĕркелеççĕ пулсан – зарядка чи массăллисен, чи тухăçлисен шутне кĕрет. Аса илтеретпĕр: «Ирхи зарядкăна» республикăн тĕп хулинче пуçласа 2011 çулта ирттернĕ. 2013 çулта çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче «çăлтăрпа» тунă зарядка «Чи массăлла ирхи зарядка» категорире Раççей тата Европа рекорчĕн официаллă статусне тивĕçнĕ. Шупашкар хулин кунĕнче иртнĕ мероприятие ун чухне 28250 çын хутшăннăччĕ. 2013 çулти зарядкăна паллă актер, Виктор Логинов /халăхра Гена Букин пек паллă/ телеертӳçĕ хутшăннăччĕ. Хальхинче Шупашкарсемпе Раççей телекуравĕн паллă, сумлă спорт комментаторĕсенчен пĕри Дмитрий Губерниев зарядка ирттерчĕ. 2007 çулта вăл интереслĕ репортажсемшĕн Раççей наци телекуравĕн ТЭФИ премине тивĕçнĕ.

«Шупашкар паян – спорт хули, Раççей вара – мăнаçлă спорт çĕр-шывĕ. Чăваш Республикин тĕп хулине паян Раççей вăйлă спорт çĕр-шывĕ пултăр тесе нумай вăй хунă Олимп чемпионĕсем, паллă спортсменсем килнĕ. Спорт уявĕпе сире пурсăра та!»– терĕ Дмитрий Губерниев сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене саламланă май. Вăл пухăннисене ирхи зарядкăна паян кăна мар, кашни кун тума, харпăр хăй сывлăхĕпе спорт пирки кашни минутра асра тытма сунчĕ. Зарядкăна хутшăнакансене çавăн пекех Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Шупашкар мэрĕ Леонид Черкесов саламларĕç. «Ырă ир пултăр сире, Шупашкарсем, пирĕн хаклă хăнасем! Сире, спортпа туслă çынсене, саламлатăп! Яланах сывă пурнăç йĕркине пăхăнăр, хăвăрпа пĕрле ыттисене те çак çул çине тăма пулăшăр. Спортпа туслисен йышĕ çулран-çул нумайланса пытăр. Юлашки вăхăтра эпир республикăра спорт юхăмĕ аталантăр тесе нумай вăй хуратпăр. Сире тухăçлă, пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе хутшăннăшăн тав тăватăп. Шанатăп: Олимп чемпионĕсемпе призерĕсем тата та тухĕç Чăваш Енрен. Сывă пултăр спортпа туслă Раççей! Сывă пултăр спортпа туслă Чăваш Ен!» – çĕкленӳллĕ кăмăлне пытармарĕ Михаил Васильевич.

Телее, ĕнер çанталăк та аван тăчĕ. Спорт форумне хутшăнакансене хĕвел те йăл кулса чыс турĕ. Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре республикăри фитнес-аэробика федерацийĕн президенчĕпе Оксана Вербинăпа спорт шкулĕнче вĕренекенсем ертсе пынипе республика влаç органĕсен ĕçченĕсем, хулари предприяти-организацисенче ĕçлекенсем, студентсемпе шкул ачисем, спорт ветеранĕсем, сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем – пурĕ 3 пин ытла çын – зарядка турĕç. Тĕрлĕ хускану тума хула çыннисене маларахах республикăри фитнес-аэробика федерацийĕн ĕçченĕсем хатĕрленĕ. Чăн та, пĕлтĕрхи массăлла зарядкăсемпе танлаштарсан ку питĕ йĕркеллĕ, килĕшӳллĕ, пĕр «кĕвĕллĕ» иртрĕ. Кашни çын палăртнă вырăнта тăчĕ, ирĕклĕн хускалчĕ. Хăнăхтарусене пĕр харăс, такăнмасăр, пăтрашмасăр пурнăçларĕç. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем пĕрешкел шурă калпаксем тăхăнни, шурă шарфсем çыхни спорт мероприятине чăннипех илем кӳчĕ. Шоу мар, чăн-чăн зарядка пулчĕ! Çапла кашни ирех пĕр чашăк кофе ĕçнинчен кăна мар, зарядка тунинчен пуçласчĕ, каçа вара уçăлса çӳресе ăсатасчĕ.

■ **Роза ВЛАСОВА**

# Пирĕн мăнаçлăх




*«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума халалланă курăмлă тепĕр пулăм вăл – Спортсменсен парачĕ. Ăна Раççей телеканалĕн ĕçченĕ Дмитрий Губерниев ертсе пычĕ.*

Парада Олимп, тĕнче тата Раççей чемпионĕсем хутшăнчĕç. Вĕсем Раççей Федерацийĕн, Чăваш Ен тата Шупашкар хулин ялавĕсене йăтса иртрĕç. Уява килнисене тĕп хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламларĕ. «Эпир хамăрăн хулапа, спортсменсемпе тата ачасемпе мăнаçланатпăр. Пурне те ăнăçу сунатăп», – терĕ вăл.

Нумай йышлă ушкăна Олимпиада-80 символĕ Упа, хăвăрт утакансен 2008 çулта Шупашкарта иртнĕ Тĕнче кубокĕн палли Кăвакал чĕппи, çăмăл атлетика енĕпе 2015 çулта ирттерме йышăннă Европа чемпионачĕн талисманĕ Çăлтăр ертсе пычĕç. Хĕрлĕ тӳремпе пĕрин хыççăн тепри Чăваш Енри паллă спортсменсем, тренерсем, спортăн тĕрлĕ федерацийĕпе ассоциацийĕн представителĕсем, спорт шкулĕсенче ăсталăхне туптакансем, ветерансем утса иртрĕç. Самбо, дзюдо, бокс, футбол, тхеквандо, гимнастика, хоккей, ташă тата ытти пĕрлĕхе çӳрекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

Ялав йăтнă çамрăксем, оркестрсем, хор, юрăçсемпе ташăçсем уяв кăмăлне çĕклерĕç.

■ **И.СЕРГЕЕВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ









# Çитĕнӳ пĕчĕк утăмран пуçланать

***Ĕнер Чăваш Енĕн тĕп хулинче Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ старт илчĕ. Кун йышши пулăм Раççейре – пĕрремĕш хут. Акцие тĕнчери 150 çĕр-шывра "Спорт пурин валли те" ассоциаци /TAFISA/ пулăшнипе 1991 çултанпа йĕркелеççĕ. Пĕтĕмпе унта халĕччен 12 млн ытла çын хутшăннă. Мероприяти тĕллевĕ – куллен физкультура тăвассине йăлана кĕртесси, халăхра спорт тата сывă пурнăç йĕркин сумне ӳстересси.***



"Паян – чăннипех те сумлă кун. "Спорт пурин валли те" пирĕн çĕр-шыва та çитни чăннипех те пысăк чыс. Вун-вун пин çын çак акцие хутшăнса физкультура тата спорт кашнин пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннине çирĕплетсе пачĕ", – терĕ Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович спорт уявне пухăннисене саламласа тата ыр сунса.

Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ Раççейре халĕччен пулман. "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форума уçнă кун çĕр-шыв пысăк çак спорт уявне паллă тăвакансен йышне кĕчĕ. "Эпир анлă спорт юхăмне кăçал пĕрремĕш хут хутшăнатпăр. Пурте пĕрле çула тухса нумай нациллĕ тăван çĕр-шывра утакансен пĕрлехи кунне паллă тăватпăр, – палăртрĕ РФ спорт министрĕ Виталий Мутко. – Спорт уявне ирттерме Шупашкара ахальтен суйласа илмен. Чăваш Ен спорта аталантарас тĕлĕшпе нумай вăй хурать".

Чăнах та, юлашки çулсенче Чăваш Республики физкультура тата спорт аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе çĕр-шывра малта пырать. Республикăра пурăнакансен 35,9 проценчĕ спортпа туслă. 2013 çулта Чăваш Ен "Раççей регионĕ" номинацире РФ Правительствин наци премине тивĕçрĕ. Физкультурăпа спорт ĕç-хĕлне йĕркелессипе РФ субъекчĕсен хушшинче икĕ çул харăс малти вырăнсене йышăнчĕ. Тата ытти çитĕнӳ те сахал мар.

РФ Олимп комитечĕн президенчĕ Александр Жуков "спортри çитĕнӳ пĕчĕк утăмран – кулленхи физкультура занятийĕсенчен – пуçланнине" палăртрĕ. "Утакансен кунне хутшăнма çакăн чухлĕ çын пухăнни кăмăла çĕклет. Сочири Олимп вăййисем хыççăн пирĕн çĕр-шыв çыннисем спорт енне ытларах туртăна пуçларĕç", – терĕ вăл.

TAFISA президенчĕ Джо-Хо Чанг профессор Раççейре Утакансен кунне çапла анлă паллă туни тĕлĕнтернине пĕлтерчĕ. Спорт уявне пухăннисене çавăн пекех Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламларĕç.

Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ, Шупашкарпа пĕр харăсах, Раççейри темиçе хулара – Сочире, Красноярскра, Белградра, Чĕмпĕрте – старт илчĕ. Çакна регионсемпе телекĕперпе çыхăнса йĕркелеме май килчĕ. Çак кун Шупашкар заливĕн çыранĕ тăрăх 15 пин ытла çын утса çаврăнчĕ. Çак йышра – Олимп тӳпине çĕкленнĕ спортсменсем, çитĕнӳсем патне ăнтăлакан çамрăксем, ватăсем, ача-пăча... Вĕсене пĕрлештерекенни – çирĕп сывлăхлă пулас килни.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

## ПИРĔН ÇИНЧЕН КАЛАÇÇĔ



**Валентин Балахничев, Пĕтĕм Раççейри çăмăл атлетика федерацийĕн президенчĕ:** "Чăваш Енре массăллă тата профессионал спорта пысăк вырăн уйăрни савăнтарать. Кунта Атăл тăрăхĕнчи кăна мар, Раççейри чи лайăх спорт сооруженийĕсене çĕклеççĕ. Чăваш Республикинче Раççейĕн пĕрлештернĕ командин лидерĕсем тренировкăсем ирттерме кăмăлласçĕ, мĕншĕн тесен кунта вĕсем валли лайăх кăтартусем тума условисем туса пареççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ юлашки çулсенче çĕр-шывăн чи ăнăçлă чемпионачĕсем Шупашкарта иртнĕ. Тата ахальтенех мар ĕнтĕ Чăваш Енĕн тĕп хулинче 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европа Кубокне ирттерме палăртнă".



**Анна Чичерова, çӳллĕшне сикессипе Олимп чемпионки:** "Чăваш Ене тепĕр хут килме питĕ хавас. "Олимпийский" стадионпа юнашар вырнаçнă хăна çуртне кĕрсен 2012 çулти кăмăл-туйăм аса килчĕ. Ун чухне эпĕ 2.07 метра парăнтарнăччĕ. Çав çул маншăн чи телейли пулчĕ. Паллах, Олимп "ылтăнĕ" – чи пĕлтерĕшлĕ награда, анчах эпĕ ку стадиона, чăваш çĕрĕ çинчи лайăх кăтартăва, хавас кăмăла нихăçан та манас çук. Регионсенче çĕнĕ йышши спорт сооруженийĕсем туни питĕ паха".



**Юрий Борзаковский, Олимп чемпионĕ, çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионĕ /2012 çул/:** "Эпĕ Шупашкара питĕ юрататăп. Кунта сборсенче тăтăшах пулатăп. Çавăнпа вĕсем çăмăл атлетикăна хакланине пĕлетĕп. Манăн 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе иртекен Европа чемпионатне питĕ хутшăнас, "Олимпийский" стадионта Раççейĕн пĕрлештернĕ команди йышăнче ăмăртас килет".

# Куравсем йыхравлаççĕ

***Тĕп хулари Хĕрлĕ тӳремре спортсменсем, спорта юратакансем хуçаланнă вăхăтра Республика лапамĕнче спортпа çыхăннă Пĕтĕм тĕнчери куравсемпе экспозицисем ĕçлеме пуçларĕç. "Спорт литератури, пресса тата мультимедиа" курава "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум ирттерме тытăнсан йĕркеленĕ. Çапла майпа асăннă профильпе ĕçлекен тĕнчери издательствăсем, мультимедиа хатĕрĕсем тата Интернет çăл куçĕсем хăйсен продукцийĕсене пиллĕкмĕш хут çакăн пек анлăн пропагандăлаççĕ.***



"Хальхи вăхăтри спорт: "Инновацисем тата малашлăх" куравăн тĕп теми – спорта пурлăхпа техника тĕлĕшĕнчен тивĕçтересси, регионсен опытне тата хальхи вăхăтри технологие çул уçса парасси. Унта çĕр-шыври тĕрлĕ фабрика паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерекен хатĕрсене тăратнă. Сăмахран, спорт инвентарĕн "Аналитика" фабрикинех илер. Вăл Раççейре спорт таварĕсем хатĕрлекен чи пысăк компанисенчен пĕри /2 пин ытла продукци кăларать. Производствăра чи çĕнĕ технологисемпе тата хальхи йышши материалсемпе усă курать/. "Аналитикăн" хатĕрĕсемпе Раççейри 50 ытла регионта тата Никама Пăхăнман Çĕр-шывсен Пĕрлĕхĕнче, çавăн пекех Евроканаш çĕр-шывĕсенче усă кураççĕ.

Пĕр йышши ĕçпе пурăнакансен тĕллевĕсене ăнланмалла: опытпа паллашасси, инвентарьсен комплекчĕсене пахаласси – тĕп вырăнта. Шупашкарти курав ку енĕпе питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ун вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен Спорт министерствисемпе ведомстввисен представителĕсем экспонатсемпе паллашаççĕ, çыхăну тытса ĕçлесси пирки килĕшӳсем тăваççĕ.

Тĕрлĕ экспозици ĕçĕ-хĕлĕ пирки те чарăнса тăмаллах пулĕ. Акă çитес çул Хусанта шыв çинчи спортăн тĕрлĕ енĕпе тĕнчен вун улттăмĕш чемпионачĕ иртмелле. Пысăк мероприятие мĕнле хатĕрленни пирки тĕплĕн паллаштарнă экспозицире. Çакна пĕлтĕмĕр: унта 180 çĕр-шывран 2400 спортсмен, 1800 официаллă çын тата 250 судья хутшăнĕç. Унсăр пуçне билетсене хăçан тата мĕнле майпа туянмаллине те ăнлантарса панă. Ĕпхӳ хули 2021 çулта Пĕтĕм тĕнчери вăйăсене ирттерме хатĕрленекен кандидатсен йышĕнче /аса илтерер: вăл Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн пуçарăвĕпе 1981 çултанпа тăватă çулта пĕрре иртет/. Пушкăртстанри спорт тусĕсем çак чыса тивĕçĕç-и? Ун пирки 2015 çулхи ака уйăхĕн 19-24-мĕшĕсенче МОКăн Сочире иртекен съездĕнче пĕлтерĕç.

Курав павильонĕнче çавăн пекех 2018 çулта Раççейре футбол енĕпе иртекен Тĕнче чемпионачĕ пирки те экспозици хатĕрленĕ. Унпа паллашнă хыççăн футбол уявне хăвăн çитсе курас, унти сывлăшпа сывласа киленес килет.

Раççей Олимп комитечĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан, регионсенче спорт енĕпе тунă çитĕнӳсем пирки каласа кăтартакан стендсем те йышлă. Вĕсене Шупашкар çыннисемпе хăнасем çитсе курма пултараççĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

# Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр!

***Шупашкарти «Спартак» физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплексăн стадионĕнче çын йышлă пухăнчĕ. Пурте савăнăçлă, чылайăшĕ спорт тумĕпе, хаваслă кĕвĕ янăрать... Кунта Пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» /ГТО/ физкультурăпа спорт комплексĕн нормативĕсене йышăнмалли пĕрлехи кун иртрĕ.***



Ку нормативсене пурнăçлас тĕллевпе тĕрлĕ ӳсĕмри – 11 ушкăнри – 1000-е яхăн çын килнĕ. Хăйсен вăйне, ăсталăхĕпе çаврăнăçулăхне сумлă форум иртекен кунсенче тĕрĕслесе пăхас текенсене стадионти халăх алă çупса кĕтсе илчĕ.

Мероприятие савăнăçлă лару-тăрура уçма РФ спорт министрĕн çумĕ, Олимп чемпионĕ Павел Колобков, министерствăн физкультурăпа массăллă спорт аталанăвĕн департаменчĕн ертӳçи Марина Томилова, ЧР спорт министрĕн çумĕ Алексей Яковлев, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков хутшăнчĕç. Павел Колобков спорта юратакансене уяв ячĕпе саламланă май кăçал Владимир Путин Президент Раççейре ГТО нормисене çĕнĕрен ĕçе кĕртесси пирки калакан хушăва алă пуснине аса илтерчĕ. Спорт хатĕрленĕвĕн программи 11 ӳсĕм категорийĕ – 6-ран пуçласа 70 çултисем тата аслăраххисем – валли пулнине пĕлтерчĕ. 4-ран пуçласа 8 норматив таран пурнăçлакансем çитес çул çуркунне ГТО паллисене илме пултарнине каларĕ. «Спорт сирĕн пурнăçăн пĕр пайĕ пулса тăтăрччĕ!» – терĕ Павел Анатольевич. Алексей Ладыков Пĕтĕм тĕнчери форум хăнисене чăваш çĕрĕ çинче йышăнни республикăшăн пысăк чыс пулнине палăртрĕ. Темиçе кун каялла ĕç коллективĕсем «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» комплекс тĕрĕслевĕсем витĕр тухни çинчен каласа кăтартрĕ. Пĕтĕмпе 170 команда, 1700-е яхăн çын хутшăннă унта. «Вĕсенчен 90% пĕр норматива та пулин ылтăн паллăлăх пурнăçларĕ», – уçăмлатрĕ Алексей Олегович.

Спорт уявне Раççей Геройĕ, виçĕ хут Олимп чемпионĕ, кĕрешӳçĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Александр Карелин, Раççей боксерĕ, тĕнче чемпионĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Николай Валуев, Олимп чемпионĕ Игорь Лавров килсе çитсен стадионти халăх шавласа-кĕрлесе кайрĕ: пĕри те теппи паллă çынсен çывăхнерех пырасшăн, вĕсене карас телефонĕпе ӳкересшĕн. Сумлă хăнасем сцена çинче калаnă сăмахсене пурте хыттăн алă çупса йышăнчĕç. Александр Карелин пухăннисене меллĕ самантпа усă курма, ГТО нормативĕсене пурнăçламашкăн ăнăçу сунчĕ. Вăйлă та сывлăхлă пуласси чăнласах та лайăх терĕ.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май РФ спорт министрĕн çумĕ Павел Колобков ГТО нормативĕсене пурнăçлас енĕпе 12 региона сăнав площадки туса хунине палăртрĕ, çак юхăма аталантарма пуçлас енĕпе ытти субъектра та ĕçлеме тытăннине каларĕ. «Ку енĕпе Чăваш Ен – лидерсенчен пĕри. Ахальтен мар ĕнтĕ эпир ГТО нормативĕсене йышăнмалли пĕрлехи куна шăпах кунта ирттеретпĕр. Çĕнтерӳçĕсене çитес çулхи çуркунне ылтăн, кĕмĕл е бронза паллăсем парăпăр, çавăнпа никама та кӳренмелле пулмĕ. Ку вăл – хавхалантаракан фактор. Паянпа ыран «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт комплексĕн нормативĕсемпе çыхăннă питĕ нумай мероприяти иртет: вĕсене пурнăçлас енĕпе методика сĕнĕвĕсем, регионсен представителĕсемпе тĕл пулусем... Шансах тăратăп: кĕçех ГТО физвоспитанин хальхи йышши çĕнĕ тытăмĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулса тăрĕ», – терĕ Павел Анатольевич.

Николай Валуев манăçа тухма пуçланă ГТОна çĕнĕрен чĕртсе тăратма йышăннине ырларĕ. Ку проектра халăхăн хальхи хатĕрленӳ шайне шута илнине палăртрĕ. «Çак программа 2017 çулхи кăрлач уйăхĕнче пур çĕрте те старт илĕ», – терĕ профессионал боксер. Çамрăк спортсменсене акă мĕн сунчĕ вăл: «Хăвăр ума тĕллев лартăр, çапах çул варрине çитсен ан чарăнăр. Тĕллеве нумай ĕçлесен çеç пурнăçлама май килет». Александр Карелин ГТО кĕлетке хитрелĕхне сыхласа хăварма пулăшнине – çамрăксем пĕрмай компьютер умĕнче ларсан вăл пăсăлма та пултарать-çке – пĕлтерчĕ. Хăй ку нормативсене иртнĕ ĕмĕрте пурнăçланине, кĕмĕл паллăна тивĕçнине каларĕ.

Ĕнерех Пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт комплексĕн федераци порталĕн тата паллисен презентацийĕ иртнĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Форумра – Дума депутачĕсем

***«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума ĕнер РФ Патшалăх Думин Вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Алена Аршинова тата Çĕр-шывсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн членĕ Александр Карелин килсе çитнĕ. Депутатсем форумăн дискусси сессийĕсене, «çавра сĕтелсене» хутшăнаççĕ.***

Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ Чăваш Енре юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче иртет. Тивĕçлĕ хушăва çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин алă пуснă. Унта тĕнчери спорт организацийĕсен ертӳçисем, Раççей Правительствин членĕсем, федерацин тата регионсен ĕç тăвакан влаç органĕсен, спорт федерацийĕсен пуçлăхĕсем тата ыттисем хутшăнаççĕ.

Форум программинче – наукăпа практика конференцийĕсем, Раççейĕн спорт çăлтăрĕсем ирттерекен ăсталăх класĕсем, пĕрлехи лару, «çавра сĕтелсем». Çавăн пекех культура мероприятийĕсем те пулаççĕ, çав шутра – Шупашкарти музейсене, куравсемпе театрсене çитсе курасси.

Спорт форумне Чăваш Енре йĕркелени ăнсăртран мар. Юлашки вунă çуллăхра регион спорта вăйлă аталантаракан тата сывă регион пулнипе палăрнă. 2013 çул кăтартăвĕсем тăрăх республикăна пуçласа «Раççей регионĕсем» номинацире Раççей Правительствин физкультурăпа спорт енĕпе паракан наци премийĕпе чысланă, 2012 çулшăн Чăваш Ен Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра çĕр-шыври регионсен хушшинче физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелес енĕпе 2-мĕш вырăн йышăннă. Республикăн Спорт министерстви пĕтĕмлетнĕ тăрăх – Чăваш Енре пурăнакан кашни виççĕмĕш çын спортпа туслă, халăха спорт сооруженийĕсемпе тивĕçтересси 45,9% танлашать.

■ **К.АНДРЕЕВ**



# Ăсталăха туптатпăр

***«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум вăхăтĕнче Шупашкарта спортăн тĕрлĕ енĕпе ăсталăх класĕсем, çавăн пекех дискусси сессийĕсем иртеççĕ.***

Спорт тренерĕсем, вĕсем патĕнче ăсталăха туптакансем валли триатлон, ирĕклĕ кĕрешӳ, çăмăл атлетика, адаптаци спорчĕ, сĕтелçи теннис, самбо, спорт гимнастики, конькипе фигурăсем туса ярăнас енĕпе 8 ăсталăх класĕ йĕркеленĕ. Занятисем тĕп хулари тата Çĕнĕ Шупашкарти спорт площадкисенче иртеççĕ.

Хăйсен професси вăрттăнлăхĕсемпе спорт çăлтăрĕсем, чи лайăх тренерсемпе специалистсем паллаштараççĕ. Вĕсен хушшинче – СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ, Раççейĕн кĕрешӳçĕ хĕрарăмсен пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Шахмурадов, СССР çăмăл атлетикăн тава тивĕçлĕ тренерĕ Михаил Кузнецов, Раççейĕн триатлон енĕпе пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Дмитрий Бутков, Раççейĕн сĕтелçи теннис енĕпе тава тивĕçлĕ тренерĕ Евгений Леонтьев, Раççейĕн фигурăсем туса ярăнас енĕпе тава тивĕçлĕ тренерĕ Виктор Кудрявцев, тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ Раис Рахматуллин самбист тата ыттисем.

Ăсталăх класĕсенче теори кăна мар, практика пайĕ те пур. Калăпăр, Çĕнĕ Шупашкарти 3-мĕш спорт шкулĕнче йĕркеленĕ ăсталăх класĕнче триатлон енĕпе ăсталăха туптама май туса панă. Кунта спикерсен тивĕçне çӳлерех асăннă Дмитрий Бутков, çавăн пекех хĕрарăмсен пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Игорь Сысоев, Чăваш Енĕн Триатлон федерацийĕн президенчĕн çумĕ Александр Яковлев тата ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Владислав Димитриев пурнăçлаççĕ.

Форумăн дискусси сессийĕсем те интереслĕ. Вĕсене физкультурăпа спорт аталанăвĕн тĕрлĕ ыйтăвне халалланă: спорт резервне хатĕрлесси, массăллă спорта вăй парасси, «ГТО» комплексне çĕнĕрен чĕртесси, тĕнче шайĕнчи спорт ăмăртăвĕсене йĕркелесси.

■ **Н.ПАВЛОВ**



*Геннадий ВЕРБЛЮДОВ, Анатолий АБРАМОВ, Надежда СМИРНОВА, cap.ru сăн ӳкерчĕкĕсем.*

# Асра юлĕ

Шупашкарти ӳнер училищинче ĕçлекенсемпе вĕренекенсемшĕн 2014 çул Культура çулталăкĕ пулнипе çеç мар, вĕсен вĕренӳ заведенийĕн сумлă юбилейĕпе те асра юлĕ. Ăна уçнăранпа кăçал 80 çул çитрĕ. Ӳнер училищи паян – наци кадрĕсем хатĕрлекен центр. А.М.Спиридонова, П.Г.Григорьев-Савушкин, Р.М.Ермолаева, О.И.Филиппов тата ытти ӳнерçĕ-педагогсен пуçарăвĕ, пултарулăхĕ сая кайман, вĕсем уçнă çула халĕ вун-вун вĕренекен, çĕр-çĕр студент такăрлатать. Кунта вĕренме кĕнĕ каччăсемпе хĕрсем "Живопиç", "Дизайн", "Театр декорацийĕн искусстви", "Декорацине хушма искусство тата халăх промисли" специальноçсемпе пĕлӳ илеççĕ.

Уяв мероприятийĕсем Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче те иртрĕç. Çак кунсенче вара хăнасене тăван училищĕре йышăнчĕç. Владимир Ануфриев директор студентсемпе преподавательсен пĕр ушкăнне Хисеп грамотипе, Тав çырăвĕпе чысларĕ.

Юбилярсен ячĕпе республика культура училищин директорĕ Геннадий Чиркин ăшă сăмах каларĕ, Чăваш патшалăх академи симфони капеллин артисчĕсем романссемпе, чăваш, вырăс халăх юррисемпе савăнтарчĕç.

# Хăнара – Мускав профессорĕ



Культура çулталăкĕ Ф.П.Павлов ячĕллĕ Шупашкарти музыка училищишĕн те пĕлтерĕшлĕ. Шăпах кăçал вăл концерт вăхăтĕнче усă курмалли пысăк роялллĕ пулчĕ. Пур рояльсен "патшин" презентацине Мускав хăни – Раççей халăх артисчĕ, Пĕтĕм тĕнчери конкурссен лауреачĕ, П.И.Чайковский ячĕллĕ Мускав патшалăх консерваторийĕн профессорĕ Александр Бондурянский – хутшăнчĕ. Бетховенăн 5-мĕш концертне вăл Раççей халăх артисчĕ Морис Яклашкин ертсе пыракан Чăваш патшалăх академи симфони капеллипе пĕрле каларĕ.

Паллă маэстро – çакăн пек рояле тивĕçнине пысăк телей вырăнне хурать. "Хальхи вăхăтра – культура валли укçа-тенкĕ çитсе пыман тапхăрта – сирĕн республикăра кунашкал инструмент валли нухрат тупни питĕ паха. Ăнланатăп: çине тăрса вăй хума тивнĕ ку енĕпе, çапах та – усăсăр мар",– тенĕ вăл.

# "Нарспи" çĕнĕлле янăрать



Нумаях пулмасть Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ хăйĕн юбилей сезонне Григорий Хирбю композиторăн "Нарспи" оперипе уçрĕ. Асăнса хăварар: опера театр сцени çине пуçласа 1967 çулта тухнă. Ăна Борис Марков лартнă. Ун хыççăн Тамара Чумакова кăларнă. Хальхи пысăк ĕçе пурнăçлама Чăваш Республикин Пуçлăхĕн гранчĕ – 2,8 млн тенкĕ – пулăшнă.

Спектакле Елена Лемешевская лартнă. Художникĕсем – Валентин Федоров /Шупашкар/ тата Нина Федорова /Мускав/. Унпа паллашма ĕлкĕрнĕ театралсем: "Çĕнетнĕ "Нарспи" – наци академи культурин бренчĕ",– теççĕ. Нарспи партине Ольга Васильева юрлать, Сетнер партине – Сергей Кузнецов.

# Куравра – натюрморт, портрет...



Çак кунсенче Элĕкри тавра пĕлӳ музейĕнче "Пурнăç малаллах тăсăлать" курав ĕçлеме пуçланă. Унăн авторĕ – Вăрнар районĕнче çуралса ӳснĕ Юрий Бурмистров.

Курава район администрацийĕн культурăпа архив ĕçĕн секторĕн ертӳçи Людмила Семенова тата район музейĕн директорĕ Светлана Железнова уçнă.

Ӳнерçĕ пейзаж, натюрморт, портрет ӳкерме юрататъ. Вĕсенче тăван тăрăх илемне, пӳлĕмсене палласа илме пулать.

Мероприяти вăхăтĕнче ӳнерçĕ шкул ачисем валли ăсталăх класĕ те ирттернĕ.

# Çĕнтерӳçĕсен йышĕнче



Культура çулталăкĕнче тĕрлĕ шайри конкурссем ирттеççĕ. Вĕсенчен пĕри – аслă вĕренӳ заведенийĕсем валли кăларнă кĕнекесен федерацин Атăлçи округĕн регионти тăваттăмĕш конкурсĕ. Вăл Шупашкарти кооперации институчĕн никĕсĕ çинче "Университетская КНИГА" информацине аналитика журналĕ пулăшнипе иртнĕ.

Йĕркелӳ комитетне çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 238 кĕнеке тăратнă. "Гуманитари тата социаллă ăслăлăхсем енĕпе чи лайăх кĕнеке" тата "Справка тĕлĕшĕнчен чи лайăх кĕнеке" номинацисенче Чăваш кĕнеке издательстви пичетлесе кăларнă кăларăмсем çĕнтернĕ. Конкурс лауреачĕсем – "Чебоксары: исторический очерк" монографи /ăна Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн автор коллективĕ хатĕрленĕ. Йышра – И.И.Бойко, Ю.В.Гусаров, В.Н.Клементьев, В.В.Орлов/ тата "Археологическая карта Чувашской Республики" ăслăлăх справка кăларăмĕ. Унăн авторĕсем те маларах асăннă институт ĕçченĕсем – Е.П.Михайлов, Н.С.Березина. Специалистсем палăртнă тăрăх – çак кĕнекесене полиграфи тата ӳнер тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра пурнăçланă.

# Çыхăнусем çирĕпленеççĕ



Раççей тĕп хулинчи Национальноçсен çурчĕ унта пурăнакан ентешсемшĕн тăван кил пекех. Вырăнти чăваш наци культура автономийĕн ертӳçисен пуçарăвĕпе унта чăваш культуришĕн пĕлтерĕшлĕ чылай мероприяти иртет. Сăмахран, "Ылтăн Пăлхар патшалăхĕн еткерлĕхçисем", "Чăваш чĕлхи тата чăвашсем пуçланса кайни" "çавра сĕтелсене", Алексей Талвир çыравçăн асăну касне тата ыттине асăнмалла. Юпа уйăхĕнче кунтах Чăваш халăх поэчĕн Геннадий Айхин 80 çулхи юбилейне паллă тăвĕç.

Çак кунсенче Национальнăçсен çуртне Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, культура программисен республика дирекцийĕн ертӳçи Максим Матросов çитсе курнă. Ентешсем çуртăн директорĕпе Николай Комаровпа тата унăн çумĕпе Александр Пономарьпа тĕл пулнă. Калаçу малашнехи çыхăнусем, тĕллевсем пирки пынă.

**Кăларăма Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

# Пĕтĕмпех вулавăшран пуçланать

***Вăтăр сакăр çул пĕр ĕçре. Çак тапхăрта утнă çул тикĕсленсе çитнĕ çеç мар, чулланса хытса ларма пултарнă. Хăйĕн тивĕçне куç хупса пурнăçлама мехел çитерет вăл. Сăмахăм Елчĕк районĕнчи Яманчӳрелĕнчи вулавăш ертӳçи Ираида Ермакова пирки.***



1936 çулта ялта библиотека уçăлнă. Тĕрĕссипе, ăна вулав çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ. Унта пурĕ те 15 кĕнеке, радиоприемник пулнă. Вицĕ хаçат çырăнса илнĕ. Яманчӳрелĕнчи пĕрремĕш библиотекарь – ача çуртĕнче ӳснĕ тăлăх ача, вулама пĕлекен Василий Синяков. Никита Петров вăхăтĕнче вара вулавăшри кĕнеке шучĕ 400 çитнĕ. Никита Тимофеевич хыççăн В.Матвеев, А.Прохоров, Ф.Федорова, В.Аникина, Г.Рахмуллин, Ф.Иванов, В.Муллин, В.Ермолаева, П.Краснов, А.Обожгеев, ыттисем ялти клуба ертсе пынă, ун чухне унта Шăмалак вулавăшĕнчен кĕнекесем илсе килсе тăнă. 1976 çулта Яманчӳрел библиотекине уçасси пирки хушу тухнă. Вăл кивĕ клубăн пĕр пӳлĕмĕнче ĕçлеме тытăннă. Шăпах çавăнтанпа ертсе пырать те ăна библиотека енĕпе ятарлă пĕлӳ илнĕ Ираида Ермакова.

Пĕрремĕшĕсене нихăçан та çăмăл мар. Ираида Петровнăн та çавна тӳссе ирттерме тивнĕ: чи малтанхи кĕнекесене вăл Наци, Елчĕк районĕн библиотекисен ылмаштарурезерв фончĕсенчен çыхха-çыххипе самолетпа турттарнă /ун чухне Лаш Таяпана пĕчĕк самолет вĕçнĕ, урăх транспорт пулман/, бибколлекторта туяннă. Çапла майĕпен-майĕпен вулавăш тĕрлĕ литературăпа пуянланса пынă. Халĕ ял библиотекин фондĕнче – 7800 кĕнеке.

Паян вулавăшра условисем питĕ лайăх: 1980 çултанпа вăл çĕнĕ кирпĕч çуртра, тăхăр çул ăна газпа хутса ăшăтаççĕ, 2006 çулта тĕслĕх библиотека ята тивĕçнĕ. Тĕрлĕ информацие электрон çăл куççенчен, Интернетран илеççĕ. Вулавăш çăмăллăхĕпе ялти çур пине яхăн çын усă курать, вулавçăсен аллине çуллен пин-пин кĕнеке лекет.

Библиотека ĕçĕнче çивĕч ыйтусем çук тени тĕрĕс мар. Малтанхи çулхисенчен те ытларах вĕсем. Сăмахран, 1995 çулччен купи-купипе хаçат-журнал çырăнса илме май килнĕ, халĕ акă чăвашлисенчен "Хыпар", "Тантăш", "Елчĕк ен" хаçатсемпе "Тетте", "Капкăн" тата "Тăван Атăл" журналсем валли çеç нухрат çитернĕ. Фонда пуянлатас тĕлĕшпе те йывăрлăхсем пур-ха. Юрать ентешсем – Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ Валерий Комиссаров, вулавçăсем хăйсем /сăмахран, Иван Андреев/ – пулăшаççĕ. Ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула хупса пуçламăш классене кăна хăварни те вулакансен, мероприятисене хутшăнакансен йышне чакарнă. Паян Яманчӳрел ачисем Шăмалакри, Лаш Таяпари шкулсенче вĕренеççĕ. Ялти шкулта 12 ача çеç пĕлӳ илет, телее, килес çул 24-ăн пулĕç.

Çапах та пуça усса, кулянса лармасть Ираида Ермакова. Малаллах ăнтăлать. Районта, республикăра ирттерекен конкурссене хутшăнать, общество ĕçне пурнăçлать. 2007 çулхи кăтартусем тăрăх вăл "Чи лайăх библиотекарь" ята тивĕçнĕ, 2008 çул пĕтĕмлетĕвĕпе – "Районти чи лайăх библиотека" ята. Пилĕк çул каялла Ираида Петровна Чăваш Республикин культурăн хисеплĕ ĕçченĕ пулса тăнă.

Халăхпа пурнăçламалли ĕçсене пĕччен тума çăмăл мар. Пысăккисене, самай пĕлтерĕшлисене, ялти культура вучахĕн ытти хастарĕсемпе – Ольга Саврасовăпа, Надежда Обожгеевăпа – пĕрле килĕштерсе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, Ираида Петровна хăй те вĕсем туса пыракан ĕçсене хастар хутшăнать. Акă "Эткер" фольклор ансамблĕпе Яманчӳрелсем тĕрлĕ конкурспа фестивальте пулнă, иртнĕ çул чăвашсен Шупашкарта иртнĕ пĕрремĕш Акатуя хутшăннă, кăçал вара Чĕмпĕр хутлăхĕнчи йăхташсен Акатуйне çитсе килнĕ. Шкул ачисен "Сармантей" ушкăнĕ республика шайĕпе иртнĕ "Пĕчĕк çеç путене" фестивальте палăрнă.

Вулавăш ертӳçин пуçарăвĕпе 2008 çултанпа пурнăçланса пыракан спорт турнирне ял каччине – Чечен вăрçинче пуç хунă Александр Муллина – халалланă. Кăçалхи ăмăртусене Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçи кунĕнче йĕркелерĕç. Яманчӳрелти, Шăмалакри, Лаш Таяпари, Аслă Елчĕкри, Тӳскелти, Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăри шкул ачисем, ял ĕçченĕсем йĕлтĕр эстафетине хутшăнчĕç. Ун умĕн кăшт маларах Ираида Петровна вулавăшра паттăрлăх урокĕ ирттерчĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсемпе Александр Архиповăн "Пĕчĕк партизан" кĕнекине вуларĕç. Ун хыççăн библиотекарь Афган, Чечен вăрçисем пирки сăмах пуçарчĕ, "Живи и помни" кĕнекепе паллаштарчĕ. Унăн 184-мĕш страницинче Яманчӳрел каччи Александр Муллин çинчен çырса кăтартнă. Саша 2000 çулхи кăрлач уйăхĕнче Грозный хулинче пуç хунă. Ăна вилнĕ хыççăн Паттăрлăх орденĕпе наградăланă.

Ираида Петровна юлашки вăхăтра çине тăрса ĕçлекен тепĕр тема – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи. Çитес çул – Аслă çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейĕ. Ялта вара асăннă вăрçа хутшăннисенчен пĕр ветеран çеç – Петр Иванов – юлнă, вăл та Канашра пурăнать. "Çак ĕçе 10-15 çул каяллах пуçăннă эпĕ, – тет Ираида Петровна. – Ветерансемпе тĕл пулса калаçнă, аса илĕвĕсене çырса илнĕ, ытти çăл куçран материалсем пуçтарнă.

"Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем" папкăна чуна çӳçентерсе уçатăп. Фронтран Артем Базарнов ашшĕ-амăшĕ патне янă темиçе çыру упранать унта.

Артем Даниловичăн çырăвĕсенчен çакна пĕлтĕм: тăван ялтан фронта тухса кайнă самантра киле ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ Надюш тата пĕчĕк хĕрĕ Лида юлнă. Çемьене тата тепĕр "çĕн кайăк" килессе кĕтнĕ. Акă мĕн сунса çырнă вăл чи çывăх çыннисене 1942 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче: " Атте-анне, май уйăхĕнче Надюш çăмăлланмалла. Çав тĕле эрех-сăра туса хурăр. Мĕн вăй çитнипе кĕçчина тăвăр. Çуллахи ĕçкĕ валли нумай кирлĕ мар: юр-вар сутăн илмелле мар, пасар эрехĕ пĕр четвĕрт тата 7-8 витре сăра çитет... Атте-анне, Надюш, Лида, хуньăмсемпе аван пурăнăр. Эпĕ киле хăçан таврăнасси паллă мар. Гитлере пĕтермесĕр таврăнаймăп. Кунта хăлха айĕнчен тупă сасси каймасть..."

Артем Базарновăн çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнчи çырăвĕнчен çакă паллă: унăн ывăл çуралнă, ăна Ванькка ят панă. Ашшĕ ăна та "чунтан-вартан юратса командирла салам" ярать, ывăлĕн сăн ӳкерчĕкне ыйтса çырать. Учукка сиктерме пӳрмен ăна чун тĕпренчĕкне, сăнне те пулин курайнă-ши? Аслă сержант тăванĕсем патне янă юлашки çыру пулнă пулĕ ку. Халĕ вĕсен килĕнче вăрçă ачи Иван Базарнов пĕччен пурăнать, ашшĕн çырăвĕсене те ял библиотекине вăлах панă.

Ираида Ермакова пурнăçлакан вун-вун мероприятире çитĕнекен ăрăва патриот воспитанийĕ парасси пысăк вырăн йышăнать. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă ентешсенчен 84-шĕ яла каялла таврăнайман. Вĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене ятарлă стенда вырнаçтарнă. Хаяр вăрçăн 1418 кунне чыслăн утса тухнисене асра тытса, вĕсен умĕнче пуç тайса кашнийĕ пирки хăйне евĕрлĕ "Вут-çулăм витĕр – Çĕнтерӳ патне" кĕнеке хатĕрлеме пуçланă. Акă Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе "Сталинграда хӳтĕленĕшĕн" медаль кавалерĕ Максим Корнилов пирĕн çине кăмăллăн пăхса ларать. Пĕр сăн ӳкерчĕкĕнче – салтак тумĕпе, теприн çинче – самай çулланнă арçын. Сталинград фрончĕн 62-мĕш армийĕн 87-мĕш стрелок полкĕнче çапăçнă Максим Корнилович. 1942 çулхи авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче йывăр аманнă, Тюменьри госпитальте сывалнă хыççăн каллех фронта çул тытнă.

Мирлĕ пурнăçра та паттăрлăх валли вырăн пур. Вăрçă хыççăн ентеш бригадирта ĕçленĕ, ĕне фермине ертсе пынă, "Октябрь" колхоз председателĕ пулнă. 1991 çулта ăна "Слава" колхозăн хисеплĕ колхозникĕ" ят панă.

Тепĕр кĕнекере Валентина Аникина ветеран пирки çырса кăтартнă. 19 çулти хĕр хăйĕн тетĕшĕпе Ваньăпа Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме пĕр кун тухса кайнă. Шел, каччă тăван яла таврăнайман, 1942 çулхи çурла уйăхĕнче Смоленск облаçĕнчи Вязьма хули çывăхĕнчи вăрçăра куçне яланлăхах хупнă. Медицина училищи пĕтернĕ пике авиаци чаçĕнчи радистка пулса тăнă. Вăл Японие хирĕç пынă вăрçа та хутшăннă, яла 1946 çулта таврăннă. Ун хыççăн 38 çул халăх сывлăхне сыхлас ĕçре вăй хунă.

Иван Афанасьев, Петр Комиссаров утса тухнă çулсемпе, чăтса ирттернĕ шăпапа паллаштаракан кĕнекесем те пур вулавăшра. Аслă çĕнтерӳ умĕн тата ытти ентеш паттăрлăхĕ пирки те каласа кăтартасшăн Ираида Петровна. Афган, Чечен вăрçисен ветеранĕсем пирки те манмасть. 24-ăн вĕсем Яманчӳрелĕнче. Çывăх вăхăтрах ятарласа хатĕрленĕ стендра вĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарĕç. Тахçанах халăхра анлă сарăлнă – "Никам та манăçман, нимĕн те манăçман" каларăш халĕ те хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман.

БИБЛИОТЕКА ĔÇĔНЧЕ ÇИВĔЧ ЫЙТУСЕМ ÇУК ТЕНИ ТĔРĔС МАР. МАЛТАНХИ ÇУЛХИСЕНЧЕН ТЕ ЫТЛАРАХ ВĔСЕМ

**Надежда СМИРНОВА**

СПОРТ

## Кĕрешӳ

Владикавказра иртнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнчен Чăваш Ен пикисем наградăсемпе таврăннă. Ăмăртура республика чысне Раççей спорт мастерĕсем Анастасия Тарасовăпа Елена Карпова хӳтĕленĕ, вĕсем 76 килограмлă виçере тупăшнă. Пирĕн ентешсем пухмача икĕ медальпе пуянлатнă. Финалта Çĕмĕрле хĕрĕ А.Тарасова Универсиада-2013 чемпионкипе вăй виçнĕ, анчах ăна парăнтарайман. Е.Карпова /Çĕрпӳ/ виççĕмĕш вырăншăн кĕрешсе мала тухма пултарнă.

## Пауэрлифтинг

Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн сусăррисен хушшинче иртнĕ турнирта та Чăваш Енĕн икĕ спортсменĕ палăрнă. Ăмăртăва ку хутĕнче Санкт-Петербургри «Шуçăм» пансионат йышăннă. 55 килограмлă виçере пирĕн ентеш Кристина Петрова пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Арçынсен ушкăнĕнче Олег Белов /54 кг/ бронза медаль çĕнсе илнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те В.Соколов ячĕллĕ спорт шкулĕнче ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Вячеслав Кострюков патĕнче ăсталăха туптаççĕ. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн команда виççĕмĕш вырăнта.

## Самбо

1998-1999 çулсенче çуралнă хĕрсем /44 регионтан 200 ытла спортсмен/ Брянск облаçĕнчи Клинцы хулинче иртнĕ çĕр-шыв ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн тупăшнă. Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă спорт шкулĕн вĕренекенĕ Вера Лоткова лайăх кăтартупа палăрнă. Сергей Пегасовăн воспитанникĕ 48 килограмлă виçере кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

МИНИ-ФУТБОЛ

# Вăрмарсем ентешне асра тытаççĕ

***Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, салтак тивĕçне Афганистанра пурнăçланă, Совет Çарĕн отличникне, «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медаль кавалерне Виктор Гаврилова асăнса урам командисен хушшинче мини-футбол турнирĕ иртрĕ.***



Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Кăçал ăна саккăрмĕш хут йĕркелерĕç. Ăмăртăва 5 урам команди хутшăнчĕ. Спортсменсене Пысăк Енккасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Васильев, РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Ю.Архипов, Виктор Гавриловăн шăллĕ, Санкт-Петербург патшалăх университечĕн Мурманск хулинчи филиалĕн директорĕ, чăвашсен культура пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ В.Гаврилов ăшшăн саламларĕç.

Тупăшусем çивĕч иртрĕç. Куçса çӳрекен кубока /тăваттăмĕш хут/ Карл Маркс урамĕн футболисчĕсем çĕнсе илчĕç /капитанĕ Н.Никифоров/. Академи урамĕ /А.Данилов/ – иккĕмĕш, Николаев урамĕ /О.Николаев/ виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Ытти футболист та лайăх выляма пултарнине, спортри ăсталăхĕ ӳссе пынине кăтартса пачĕ. В.Алексеевпа В.Никифоров пуринчен ытларах мечĕк тапса кĕртме пултарчĕç. «Чи лайăх хапхаçă» ята В.Гаврилов тивĕçрĕ. А.Александровпа А.Григорьев тапакан мечĕксене тытма çăмăл пулмарĕ. А.Ивановпа Н.Сейфуллин судьясем турнир вĕçлениччченех спортсменсем выляняне тĕрĕс хак пама пултарчĕç.

**Анатолий ХОВАНСКИЙ**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – сырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 09.10.2014 ală пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре ală пусмалла, 20 сехет те 45 минутра ală пуснă.
Тираж 7384. Заказ 3864.